рег. 137 Инв. № 2912

40-44

2912

# К. В. ИВАНОВĂН

## ПУРНĂÇĔПЕ ТВОРЧЕСТВИ

*ДОКЛАДЧИКСЕМ ВАЛЛИ*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1940

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палатс
„ — “ ——— 1940 г.
№ 137

# Константин Васильевич Иванован

## ПУРНĂÇĔПЕ ТВОРЧЕСТВИ

ДОКЛАДЧИКСЕМ ВАЛЛИ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ
КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ◆ 1940

Редакторы: А. ЭСХЕЛЬ и В. ДОЛГОВ.
Тех. редактор Ф. ЯКОВЛЕВ.

Сдано в набор 16/IX 1940 года. Подписано к печати 26/IX 1940 г. НТ 2555. Заказ № 2720.
Тираж 2000 экз. Об'ем 0,5 печ. л.
Кол. п. зн. 74 880. Формат бум. 82×110 1/64

Тип. № 2 Наркомместпрома ЧАССР, г. Алатырь.

1940 çулти майăн 28-мĕшĕнче чăвашсен художествăллă литературин тата литература чĕлхин никĕсне хывакане, чăваш поэзийĕн классикĕ Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа 50 çул тултарчĕ.

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1940 çулти майăн 28 мĕшĕнче К. Иванов юбилейне сарлакан уявласа ирттересси çинчен постановлени йышăнчĕ. Сентябрĕн 10-мĕшĕнчен пуçласа октябрĕн 20-мĕшне çитиччен Чăваш республикинчи пур хуласемпе ялсенче те поэт çурални 50 çул тултарнă ятпа чаплă ларусем, литература вечерĕсем пулса иртмелле.

Чăваш халăхĕ Константин Иванов ятне чун-чĕререн ăшă кăмăлпа асăнать. Хăйĕн кĕске ĕмĕрĕ тăршшинче К. Иванов паха произведенисем çырнă, пирĕн халăха валли пуян наследство хăварнă. Вăл çырнă произведенисем историшĕн те, культурăшăн та пысăк пуянлăх пулса тăраççĕ.

Поэт 50 ҫул тултарни—вăл чăваш халăхĕн нациллĕ, советлă культурин уявĕ, чăваш литературин ҫĕнĕ вăйĕсемпе ҫитĕнĕвĕсене пăхса тухмалли праҫник.

„Халăхсен тĕрми" шутланнă патша Российĕнче поэтăн пурнăҫĕ йывăр пулнă,—хăйĕн творчествин ҫӳлĕ пусăмне ҫитмешкĕн ăна питех те тумхахлă ҫулпа утма тивнĕ. Ҫав саманара мĕнпур чĕрĕ вăй-халсене путарса, пăчлантарса пынă. „Патша Российĕнчи нумай йышлă вырăсмар халăхсем пачах правăсăр пулнă, вĕсенчен тĕрлĕ майсемпе вĕҫĕмсĕр мăшкăллană, вĕсене кӳрентернĕ". Патша правительстви „национальноҫсен чĕлхипе хаҫатсемпе кĕнекесем кăларма чарнă, шкулсенче тăван чĕлхепе вĕренме чарнă. Патша правительстви наци культури кирек мĕнле палăрнине те пăчăхтарса лартма тăрăшнă, вырăсмар халăхсене вăйпах „вырăслатас" политикăна тытса пынă" („ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ", 6—7 стр.).

Поэта хăйĕн халăхĕ патне ҫул уҫма питĕ хĕн пулнă. Унăн произведенийĕсене хăйĕн ятне кăтартмасăрах пичетлесе кăларнă, вĕсене малалла татах пичетлесе кăларасси ҫинчен шухăшламалли те пулман. Ҫитменнине, вăл вăхăтра халăхăн пысăк пайĕ тĕттĕмлĕхре пăчăхса пурăннă.

Çак сăлтавсем пурте Октябрь революцийĕ пуличченех К. В. Иванов поэзине халăх хушшине сарăлма памасăр тыткăнра тытса усранă.

Константин Иванов—халăх поэчĕ. Демократиллĕ писатель пулса тăракан Ивановăн мировоззренийĕ 1905—1907 çулсенчи революциллĕ событисен обстановкинче, вырăссен классикăллă литературин прогрессивлă идейисен влиянийĕпе чăмăртанса çирĕпленнĕ.

Иванов поэзийĕ çуралса тухни, чăваш литератури хăй çуралса тухни те, 1905—1907 çулсенчи революципе çыхăнса тăрать. Çав çулсенче чăваш чĕлхипе светски литература пичетлесе кăларма кăштах майсем тупăнаççĕ. Вырăссен малтанхи революцийĕ поэта пурнăçри социальнăй явленисем çине уçăмлăрах та тĕрĕсрех пăхма вĕрентет. К. Иванов чăваш ялĕсем чухăнсемпе пуянсем çине пайланса тăнине уçăмлăрах курма тытăнать. Унăн кăмăлĕ ялти чухăнсем еннелле туртăнать, вăл пуянсене ытларах та ытларах курайми пулать. Чăн та, унăн произведенийĕсенче тӳрех революци тума чĕнни курăнмасть, анчах унăн творчестви хăйĕн ăшчикĕпе пĕтĕмĕшпех революциллĕ творчество. Иванов поэзийĕнче эпир

революциллӗ тапхӑрӑн сывлӑшӗ варкӑшса тӑнине уҫҫӑнах куратпӑр. Поэт пӗтӗм чунхавалӗпе хӗрӳленсе, этем тивӗҫлӗхне пӑсса тӑракан „укҫа тытӑмне“ хирӗҫ, халӑха, нимӗнрен малтан хӗрарӑмсене, чуралӑхра тытса усракан йӗркесене хирӗҫ ҫӗкленет. Вӑл пӗтӗм телее пуянлӑхпа укҫара ҫеҫ шыракан, ҫав укҫашӑн этемӗн тивӗҫлӗхне сутса е таптаса тӑкма хатӗр тӑракан кулаксен—Михетерпе Тӑхтаманӑн—тискер сӑн-сӑпачӗсене уҫса кӑтартать.

Иванов поэзийӗ—вӑл этем ирӗкне пусмӑрланине хирӗҫ кӗрешме чӗнекен, ҫынсене ирӗке тухса хӑйсен савӑнӑҫне тупасси ҫинчен ӗмӗтлентерекен, „ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере вӑйли те ҫук этемрен“ тенӗ мухтав юррипе янӑракан поэзи. Ку тӗлӗшрен Иванов поэзийӗ вырӑс халӑхӗн аслӑ поэчӗсен — Пушкин, Лермонтов, Некрасов т. ыт. поэзийӗпе пӗр майлӑ янӑрать. Пысӑк гражданин тата аслӑ художник пулма Константин Иванов ҫав поэтсенчен вӗреннӗ.

Иванов поэзийӗ хӑйӗн ӑшчикӗпе те, формипе те халӑх поэзийӗ пулса тӑрать. Вӑл поэзи ирӗклӗхшӗн ҫунакан халӑхӑн чи таса кӑмӑлӗсене, хӗрарӑма чуралӑхран хӑтарассишӗн ҫунакан ӗмӗчӗсене,

çынна çын пусмăрланине тĕп тăвасси-шĕн кĕрешекен халăхăн çутă шанчăкĕ-сене палăртса тăрать.

Константин Иванов хăйĕн творчес-твине пуçласа янă вăхăтра пирĕн чăваш-сен писательсем питех те сахал пулнă. Вăл вăхăтра çырма тытăннисем пурте, К. Иванов пекех, малтанхи утăмсем кăна тума пуçланă пулнă. Иванов про-изведенийĕсем—пуринчен ытла „Нарс-пи" поэма—пичетленсе тухиччен чă-ваш литературинче пурнăçа çавтери анлăн та тарăннăн, пурнăçри явленисене çавтери тĕрĕс те хăюллăн кăтартса па-ракан произведенисем пулман; фольклор произведенийĕсене çыркаласа илнисем пулкаланă тата пăч-пач уйрăм сăвăсем пичетленкеленĕ. Иванов çырнă „Нарспи" поэма—художествăллă пахалăх енчен тата пурнăçри явленисене тĕплĕн çутат-са парас енчен пысăк вырăнта тăракан чи малтанхи произведени.

Иванов поэзийĕ тата унăн чĕлхи чă-вашсен илемлĕ литературипе литерату-рăллă чĕлхене аталантарас ĕçре тĕп ни-кĕс вырăнне вырнаçса юлнă. Çавăнпа та К. В. Иванов чăвашсен илемлĕ литера-турипе литература чĕлхин никĕсне хы-ваканĕ пулса тăрать.

* * *

Константин Васильевич Иванов 1890 çулти майăн 15-мĕш кунĕнче (кивĕ стильпе) Ĕпхӳ кĕпĕрнинче (халĕ Башкир АССР), Белебей уездĕнче, Слакпуç ятлă ялта çуралнă.

Унăн ашшĕ-амăшĕсем пуян хресченсем пулнă, хăйсен аллинче нумай çĕр тытса тăнă.

Поэтăн аслашшĕ те, ашшĕ те хут вĕреннĕ çынсем пулнă. Константин Васильевича та ашшĕ-амăшĕсем, хуçалăхра лайăхрах ĕçлеме пĕлекен çын пултăр тесе, хут вĕрентме тăрăшнă. Анчах та Иванов ашшĕ-амăшĕ йĕрĕпе кайман, вăл пуянсене питлесе чухăнсене хӳтлекен çын пулса тăнă.

1898 çултан пуçласа 1901 çула çиччен К. Иванов пуçламĕш шкулта вĕренет. 1902 çулта вăл Белебей хулинчи шкула вĕренме кайса кĕрет. Ку шкулта патша правительстви чĕртсе пыракан нациллĕ хирĕçӳ питĕ вăйлă пулнă. Сисĕмлĕ чĕреллĕ çамрăк Константин, çак тискер йĕркесене чăтса тăраймасăр, шкултан тухса тарать те яла, ашшĕамăш килне, таврăнать. Çитес кĕркуннеччен вăл ялтах пурăнать.

Вăл вăхăтра чăвашсен пĕртен-пĕр вă-

там шкулӗ—Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗ анчах пулнӑ. К. В. Иванов та 1903 ҫулта, кӗркунне, ҫак шкула килсе кӗрет. Малашне вара унӑн пӗтӗм кунҫулӗ (вӑл кӗске вӑхӑтлӑх унта-кунта кайса ҫӳрени-семсӗр пуҫне) Чӗмпӗртех иртет.

1903 ҫултан пуҫласа 1905 ҫула ҫитиччен, икӗ ҫул хушши, К. В. Иванов приготовительнӑй класра вӗренет, 1905 ҫулта, кӗркунне, учительсем хатӗрлекен шкулӑн пӗрремӗш класне кӗнӗ.

Малтанхи кунсенчен пуҫласах К. В. Иванов питӗ лайӑх вӗренме тытӑннӑ. Пушӑрах вӑхӑтсенче вӑл яланах илемлӗ литература вулама юратнӑ. Вӑл вырӑс тата Хӗвеланӑҫ Европа литературин классикӗсем: Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Белинский, Толстой, Шекспир, Гете, Гейне т. ыт. ҫырнисене пикенсе вӗренет. Ҫав вӑхӑтрах ун аллине чӑвашла чӗлхепе ҫырнӑ малтанхи произведенисем лекеҫҫӗ: пӗри—М. Ф. Федоров ҫырнӑ „Арҫури“, тепри—Г. Т. Тимофеевӑн „Тӑхӑр ялӗ“. Ку произведенисене вуласа тухнӑ хыҫҫӑн, пулас пысӑк поэтӑн пӗтӗм чун-чӗри ҫӗкленсе каять, вӑл чӑваш сӑмахлӑхӗн пӗтӗм пуянлӑхне, тӑван чӗлхен кӑмӑла хумхантаракан янравлӑхне тата ытларах туйса илет.

Константин Васильевич, мĕн пĕчĕкренпех чăваш юрри-сăввисемпе юмахĕ-халлапĕсене итлеме юратнăскер, Чĕмпĕр шкулĕнче чăваш сăмахлăхне пуçтарма тытăнать, унăн чи паха тĕслĕхĕсене хăйĕн пулас произведенийĕсем валли суйласа илет.

К. Иванов пурăннă саманара çĕршывра çĕрулпучĕсемпе капиталистсем пуçпулса тăнă. Российăри халăх пуçĕ çинче полицейскисемпе жандармсен армийĕ тăнă. Вĕсем эксплоататорсене хўтлесе пурăннă.

Чăваш халăхĕ, Российăри ытти вак халăхсем пекех, пĕтсе ларасси патне çитнĕ. Чăваш халăхне патша Российĕн чиновникĕсемпе улпучĕсем çеç мар, хăйĕн кулакĕсем, купцисем, пупĕсем т. ыт. харампырсем пусмăрланă.

1905—1907 çулсенче Российăра пĕрремĕш революци пулса иртет. Революци Российăри пур халăхсен пурнăçне те пысăк улшăнусем кўрет. „Революци обществăн пур класĕсене те хускатса янă. Вĕсене çĕршывăн политикăллă пурнăçĕнче революци тунă çаврăну нумай вăхăтчен ларнă кивĕ позицисенчен тапратса янă, вĕсене çĕнĕ обстановкăна май урăхла ушкăнланса тăма хушнă.

Кашни класс, кашни парти хăйĕн тактикине тума тăрăшнă, хăйне хăй тыткаламалли линине, хăй ытти классем çине мĕнле пăхмаллине, правительство çине мĕнле пăхмаллине палăртса хума тăрăшнă“ („ВКП(б) историйĕн кĕске курсĕ“, 75 стр.).

Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕренекен ачасем хушшинче те революциллĕ шухăшсем уççăнах палăрма пуçлаççĕ. Çакна пула патша правительствин ирсĕр йыттисем 1906 çулхи кĕркуннех вунвунпилĕк ачана „политика тĕлĕшĕнчен шанчăксăррисен“ шутне кĕртсе хураççĕ. Çак событисем вăхăтĕнче К. В. Иванов хăйсен шкулĕнчи пупсемпе чиновниксенчен тăрăхласа карикатурăсем тăвать, сăвăсем çырать т. ыт. те. 1907 çулта, февраль уйăхĕнче, шкул садĕнче, вĕренекенсем митинг туса ирттереççĕ. Митингра политикăллă сăмахсем тухса калаççĕ, революциллĕ юрăсем юрлаççĕ. Çак ĕçшĕн 1907 çулти мартăн 8-мĕш кунĕнче, пĕрремĕш класра вĕренекенсемпе пĕрле, Иванова та шкултан кăларса яраççĕ.

1905—1907 çулсенче пулса иртнĕ революциллĕ событисем поэтăн ăстăнĕпе кăмăлне хавхалантараççĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл

хӑйсен шкулӗн пурнӑҫӗпе анчах мар, халӑх пурнӑҫӗпе те, ҫӗршывӑн политикӑллӑ пурнӑҫӗпе те интересленме тытӑнать. Ку событисем тата вырӑссен прогрессивлӑ литературинчен вуласа илнисем пурте поэтӑн куҫне тата та ытларах уҫаҫҫӗ: вӑл патша Российӗнчи обществӑллӑ пурнӑҫра мӗнле улшӑнусем пулса иртнине уҫҫӑнрах курма пуҫлать.

1905—1907 ҫҫ. революци хыҫҫӑн хура реакци ҫулӗсем пуҫланса каяҫҫӗ. Ҫӗршывра хура террор ашкӑнать, ӗҫхалӑхӗ ҫине вӑрхурахла тапӑнаҫҫӗ.

К. В. Ивановӑн пурнӑҫӗнче ҫӗнӗ тапхӑр пуҫланать.

Вунултӑ ҫулхи Константинӑн малалла вӗренес килет. Вӑл ҫак ӗмӗтпе Бирскри, Благовещенскри семинарисене ҫитсе пӑхать, анчах та „бунтовщика“ ниҫта та вӗренме илмеҫҫӗ.

1907 ҫулта, октябрь уйӑхӗнче, Иванов каллех Чӗмпӗре таврӑнать. Пурнӑҫ условийӗсем йывӑр пулнӑ пулин те, вӑл революци ҫӗкленӗвӗ тапхӑрӗнче хӑй пуҫӗнче ҫуралса тухнӑ творчествӑллӑ плансене пурнӑҫа кӗртме тытӑнать. Пуҫламӗш шкулсенче вӗренмелли чӑвашла кӗнекесем кӑларас тӗлӗшпе тӑрӑшса

ĕçлет, вырăсларан чăвашла куçарать т. ыт. те. Чĕмпĕрти шкултa вăл çак кĕнекесене кăларас ĕçе хутшăнса ĕçлет: „Первая книга после букваря“, „Первая и вторая книга для чтения“ Л. Н. Толстого, „Образцы мотивов чувашских песен“, „Аленький цветочек“ Аксакова, „Дикие лебеди“ Андерсена т. ыт. те.

Ку ĕç К. Иванова литературăра татах та пысăкрах, хăюллăрах утăмсем тума хăват парать. Хĕле кĕрсенех (1907—1908 çç.), вăл тахçантанпах кăмăлне хумхантарса пурăннă ĕçе пурнăçлать—М. Ю. Лермонтовăн „Песня про купца Калашникова“ ятлă поэмине çавтери пысăк мастерлăхпа чăвашла куçарать. Лермонтовăн çак произведенийĕ, вырăс халăхĕн тивĕçлĕхне мухтаса юрлаканскер, Ивановăн чунне питех те çывăх тăнă, унăн творчествăллă шухăшĕсене хавхалантарнă, çавăнпа та вăл ăна пĕтĕм чĕререн тăрăшса куçарнă. Куçару ĕçĕнче хăйĕн вăйĕпе пултарулăхне тĕрĕслесе пăхнă хыççăн Иванов чăвашла произведенисем çырма пуçлать. Çак çулсенчех вăл виçĕ юмах („Тимĕр тылă“, „Икĕ хĕр“, „Тăлăх арăм“) тата классикла поэма „Нарспи“ çырса пĕтерет.

Унăн произведенийĕсем, пуринчен ытларах „Нарспи“ поэми, пĕтĕм чăваш поэзийĕн тĕп никĕсне кĕрсе, илемлĕ литературăн малашнехи ӳсĕмĕшĕн пĕтĕмĕшлĕ тапхăр пулса юлнă.

К. Иванов произведенийĕсем чи малтанхи хут 1908 çулта „Сказки и предания чуваш“ ятлă кĕнекере пичетленсе тухнă. Вăл кĕнекене Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ, унăн инспекторĕ И. Я. Яковлев тăрăшнипе, пичетлесе кăларнă. Унта Ивановăн ятне автор тесе мар, халăх творчествине пуçтаракан тесе анчах кăтартнă пулнă.

Çакна палăртмалла: Иванов Чĕмпĕр шкулĕнче пурăннă чух, ăна литература ĕçĕнче И. Я. Яковлев сахал мар пулăшнă.

Творчество енĕпе ĕçленĕ вăхăтрах Иванов хăй тĕллĕнех живопиç ĕçне тата йывăçран тĕрлĕ чĕнтĕрсем касса кăларма вĕренсе пырать.

1909 çулăн пуçламĕшĕнче Иванов Чĕмпĕрти классически гимназире учитель ятне илме питех те ăнăçлăн экзамен тытать. Вăл хăйĕн халăхне çутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлесшĕн, учителе кĕме прошени хыççăн прошени парать, анчах пур çĕртен те ăна пĕртен-пĕр сăмахпа „отказать“ тесе ответлеççĕ.

1909—1910 çулхи хĕле поэт тăван ялĕнче—Слакпуçĕнче пурăнса ирттерет. Çуркунне вăл каллех Чĕмпĕре таврăнать те чăваш шкулĕ çумĕнчи двухкласнăй училищере чистописанипе рисовани учителĕ пулса ĕçлеме тытăнать.

Поэтăн пуçĕнче çĕнĕрен çĕнĕ творчествăллă шухăшсем çуралса пыраççĕ. Ăна хăй юратнă поэтсен: Лермонтовăн, Некрасовăн, Кольцовăн т. ыт. произведенийĕсене чăвашла куçарас ĕмĕт хумхантарать. Анчах, çав вăхăтрах, литература ĕçĕпе пурăнма май çуккине лайăх курса тăрать вăл: патша правительстви чăваш поэтне, ытти вак халăхсен поэчĕсем пекех, турăпа шуйттансăр пуçне урăх нимĕн çинчен те çырма ирĕк парас çук. Ку вăл—хура реакци тапхăрĕ пулнă. Чăнах та, Иванова библи куçарма лартаççĕ. Вăл лăш канмасăр ĕçлет. Унăн ачаранах начар сывлăхĕ татах та ытларах япăхать.

1914 çулта, кĕркунне, поэт Слакпуçне таврăнать. Туберкулезпа катар ăна парăнтарсах çитереççĕ.

1915 çулти мартăн 13-мĕш кунĕнче (кивĕ стильпе) поэтăн чĕри тапма чарăнать. Унăн тупăкне масар çине пĕтĕм ял çыннисем ăсатма пыраççĕ. Поэтăн

кӗлеткине нӳрӗ тӑпрапа витсе хунӑ хыҫҫӑн, халӑха „Нарспи“ поэма валеҫсе параҫҫӗ.

*
* *

К. В. Ивановӑн оригиналлӑ творчестви чӑваш юмахӗсене сӑваласа ҫырнинчен пуҫланса кайнӑ. Вӑл мӗнпурӗ виҫӗ юмах ҫырнӑ: „Икӗ хӗр“, „Тимӗр тылӑ“ тата „Тӑлӑх арӑм“.

Ҫамрӑк поэт, 1905—1907 ҫҫ. революци тӑвӑлӗпе ҫирӗпленнӗскер, халӑх юмахӗсен содержанине хӑйне кирлӗ пек туса улӑштарнӑ. Иванов ҫак юмахсенче ҫӗр ҫинчи тискерлӗхе питлет, ырӑпа усала уйӑрса илме вӗрентет, этеме юратма чӗнет.

Сӑмахран, Иванов „Икӗ хӗр“ ятлӑ халӑх юмахӗн содержанине хӑйне майлӑ улӑштарнипе унӑн тӗп шухӑшне татах та ытларах тарӑнлатса ҫивӗчлетнӗ. Вӑл юмахӑн кӗске содержанийӗ ҫакӑн пек. Ашшӗ хӑйӗн икӗ хӗрӗнчен ыйтать: ҫак ҫӗр ҫинче мӗн мӑнтӑр, мӗн тутлӑ, мӗн ҫемҫе?—тет. Аслӑ хӗрӗ, чуралла мораль тыткӑнӗнчен тухманскер, хӑйне халлӗн ухмахланакан тӑмсай ашшӗне юрас тесе, унӑн пуянлӑхне мухтать. Ашшӗне хирӗҫ вӑл ҫапла тавӑрса калать:

— Пирĕн атте килĕнчи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
— Пирĕн атте килĕнчи
Вĕллери пыл пит тутлă.
— Пирĕн атте килĕнчи
Тӳшек-минтер пит çемçе,—

тет. Ашшĕ ăна çак сăмахсемшĕн тем те пĕр парса парнелет. Тăмсай старик шухăшĕпе тĕрĕслĕх—унăн мулне ырланинче иккен.

Пачах урăхла ответсем парать старикăн кĕçĕн хĕрĕ. Вăл пурнăç чăнлăхĕ çине тĕрĕс куçпа пăхать. Акă унăн отвечĕсем:

— Çут тĕнчере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр ним те çук.
— Ыйхă тутлă, тĕнчере
Унтан тутли ним те çук.
— Ала çемçе, тĕнчере
Унтан çемçи ним те çук.

Тăмсай старик кĕçĕн хĕрне çак тĕрĕс ответсемшĕн килĕнчен хăваласа кăларса ярать.

Халăх юмахĕсем хушшинче кун пек сюжетсем пайтах тĕл пулаççĕ. Анчах та Иванов юмахĕнче, халăх юмахĕнчи пек мар, ашшĕ хăйĕн кĕçĕн хĕрне тĕрĕс сăмахсем каланăшăн килтен хăваласа

ярать. Поэт ӑна капитализмлӑ общеҫтвӑн тискер сӑн-сӑпатне ӗненterӳллӗрех кӑтартса парас тесе ҫапла тунӑ. Капитализм самани тӗрӗслӗхе яланах путарса пурӑннӑ.

„Тимӗр тылӑ“ ятлӑ юмахра К. Иванов ҫемьери хӗрарӑм аслисене чуралла пӑхӑнса тӑнине, ӑна ӗмӗртенхи тӗшмӗшлӗхсем тыткӑнра хӗстерсе усранине кӑтартса панӑ. Ӗмӗртен тытӑнса тӑракан чуралӑх йӗркисене пӑсас текен ҫынна вилӗм кӗтнӗ. Иванов ку юмахӑн содержанине те хӑйне кирлӗ пек улӑштарнӑ. Халӑх юмахӗнче тимӗр тылӑ кинӗн пуҫне анчах ҫиет. Иванов юмахӗнче ҫав тимӗр тылӑ кинне ҫеҫ мар, тухатмӑш карчӑкне те тӗп тӑвать. Иванов кунта вулакана ҫак шухӑш патне илсе пырать: тӗнчере тӗшмӗшлӗхсемпе суя ӗненӳсенчен те ытларах усал вӑй пур, мӗнпур тӗшмӗшлӗхсем ҫав вӑйран тухса тӑраҫҫӗ; юмахри кин хӑй те, унӑн амӑшӗ те ҫав усал вӑй чурисем кӑна.

„Тӑлӑх арӑм“ ятлӑ юмаха К. В. Иванов 1907—1908 ҫулсенче ҫырнӑ. Ку юмахра эпир Иванов вӑрҫӑра вилнӗ упӑшкинчен тӑлӑха тӑрса юлнӑ арӑма пӗтӗм чӗререн хӗрхеннине куратпӑр. Поэт сӑвӑланӑ юмахра кӑтартнӑ ҫӗр ҫинче нимӗ-

не хӗрхенмесӗр ишӗлтерсе пыракан вӑрҫӑн хӑрушӑ мӗлки выртать. Ку юмах, ыттисемпе танлаштарсан, реальнӑйрах произведени. Кунта ҫакна каласа хӑвармалла: вырӑс правительствишӗн ӑнӑҫсар вӗҫленнӗ яппун вӑрҫи чӗрӗ сисӗмлӗ ҫамрӑк поэта хумхантармасӑр иртме пултарайман. Вӑрҫӑра вилсе пӗтнӗ ҫынсен тӑлӑха тӑрса юлнӑ тӑванӗсем асапра нушаланса пурӑнни, вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи тертлӗ те юхӑнчӑклӑ пурнӑҫ—ҫаксем пурте Иванов юмахӗнче тӗкӗр ҫинчи пек курӑнса тӑраҫҫӗ.

Чӑваш юмахӗсене сӑвӑласа ҫырнипе пӗр вӑхӑтрах, Иванов пуҫӗнче классикӑлла поэмӑн тӗп шухӑшӗсемпе образӗсем пиҫсе пынӑ. Поэт ку поэмӑра этемлӗх прависене тивӗҫсӗрлетнине, этемӗн хисепне тӑмсай ҫӗрме-пуянсем таптаса тӑкнине хирӗҫ, тискер традицисемпе чуралла морале хирӗҫ уҫҫӑнах протестлет.

Иванов „Нарспи“ поэмӑра авалхи чӑваш ялӗн пурнӑҫӗпе йӑлисене сӑнласа кӑтартнӑ. Поэмӑри ялта укҫан тата укҫа урлӑ хутшӑнса тӑнин вӑйӗ курӑнать, унти ял уҫҫӑнах икӗ пая уйӑрӑлса тӑрать: пӗр енче кулаксем, тепӗр енче чухӑнсем. Силпи ялӗ тулашӗнчен пӑхма

кăна патриархальнăй ял пек курăнать, унăн шалти пурнăçĕнче çавтери çивĕч социальнăй хирĕçӳсем пулса иртеççĕ. Революци поэта çав хирĕçӳсене курса тĕрĕс ăнланма пулăшнă. Çав хирĕçӳсене художествăллăн уçса пани çинче никĕсленсе тăрать те ĕнтĕ Иванов поэми.

„Нарспи" поэмăра мĕнпурĕ 14 юрă. Поэма яла ырă çуркунне çитнине кăтартса панинчен пуçланать. Çуркунне! Йĕри-таврах илем, йĕри-таврах савăнăç, йĕри-таврах пурнăç чĕрĕлет. Пуринчен ытларах этем илемлĕ: вăл вăйлă та, хăватлă та.

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать,—

тесе савăнăçлăн пĕлтерет поэт. Анчах та çав вăйлă этеме эксплоатаци никĕсĕ çинче тытăнса тăракан тискер пурнăçăн законĕсем тыткăнра тытса усраççĕ.

Аякран пăхсан Силпи ялĕнче пурнăç лайăххăн та канăçлăн иртнĕ пек туйăнать. Анчах пурăна-киле çав „лăпкă" ялта калама çук пысăк трагеди пуçланса каять. Аста художник Иванов вулакана малалла пулас событисем çинчен пĕлме

пите астуса, майёпен хатёрлесе пырать. „Силпи ялё—пуян ял“. Анчах поэма пуçламёшёнчех çав пуян ял çине выçса çитнё кётӳçё тёмсёлсе пăхать. „Этем вăйлă!“ Анчах поэт çийёнчех астутарса хăварать:

Анчах вăйлă этем те
Хăй тёнчине пăхăнать.
Укçапала эрехех
Çынна ăсран кăларать,—

тет вăл. Çакăн хыççăн вара поэт таса чёреллё этемсем укçа тытăмне хирёç, пурнăçăн тёрёсмарлăхёсене хирёç кёрешнине сăнласа кăтартать.

Поэмăн иккёмёш юрринче вулакансем умне виçё образ тухса тăрать: Нарспи, Михетер, Сетнер. Нарспипе Сетнер чунтан-вартан пёр-пёрине юратаççё, анчах Нарспи ашшё Михетер хăйён хёрне чухăн Сетнере качча памасть. Вăл ёнтё хăйён хёрё валли пуян кёрӳ тупса та хунă,—ватă Тăхтамана качча парать вăл Нарспие. Акă Çимёк праçникё çитрё. Çимёк умён Нарспи туйё пуçланчё. Тепёр кунтан Тăхтаман та килсе çитмелле. Чун юратман çынран хăтăлас тесе, Нарспи Сетнерпе вăрмана тарать. Анчах вёсене çийёнчех тытса килеççё.

Тăхтаман килет, Нарспие ашшĕ-амăшĕ пилленипе ирĕксĕрех хăй патне илсе каять. Нарспишĕн хурлăхлă кунсем пуçланаççĕ. Вăл çак мăшкăлпа ниепле те килĕшме пултараймасть. Хăйне хăтарма Сетнер килессе кĕтет вăл. Чăнах та, Сетнер хăй те Нарспие усал упăшка тыткăнĕнчен хăтарма шут тăвать. Анчах Нарспи хăйĕн ĕçне Сетнер килсе ĕлкĕричченех туса хурать: вăл Тăхтамана наркăмăш парса вĕлерет те Сетнер патне пырать.

Çак ĕç çинчен пĕлсен, Нарспи ашшĕ-амăшĕсем Сетнер килне пырса кĕреççĕ. Вĕсем Нарспие хăйсем патне таврăнма ӳкĕтлеççĕ. Малалла Михетерпе Нарспи хушшинче диалог пуçланса каять. Ку вырăнта поэт вулакана Михетерĕн чăнчăн кулакла сăн-питне, унăн çаткăнлăхне уçса парать. Михетер Нарспие Сетнер аллинчен вăйпах туртса илсе, вăл хăйĕн хакне пуçĕпех çухатма ĕлкĕреймен чух, ăна укçашăн тепĕр хут сутса яма та хатĕр.

Атя, хĕрĕм, таврăнар
Шăтăк-шатăк ку пӳртрен.
Тепрер каччă тупăпăр
Яту çĕрсех кайиччен...—

тет вăл Нарспие.

Кӗлетки-ҫурӑмӗпе те, ӑс-пуҫӗпе те вӑйлӑ ҫын Сетнер Михетершӗн нимӗн те мар, мӗншӗн тесен унӑн мулӗ ҫук. Михетер мула кӑна ӗненет. Уншӑн пулсан хӑйӗн тӑван хӗрӗ те сутса укҫа тумалли япала кӑна: вӑл ӑна ҫуратнӑ, ӳстернӗ, мӗн ӳссе хӗр пӳне ҫитиччченех епле те пулин хаклӑраха сутма ӗмӗтленсе пурӑннӑ. Кулак-Михетершӗн пӗтӗм телей—укҫапа пуянлӑхра. Анчах Нарспи, укҫан тискер вӑйне хӑй ӗнси ҫинче чӑтса курнӑскер, ашшӗн пӗр сӑмахне те йышӑнмасть. Уншӑн пурнӑҫ пуянлӑхра мар.

Пуянлӑхра анчах мар,
Ыр курасси—ҫыннинче...—

тет вӑл ашшӗне хирӗҫ татӑклӑн.

Нарспи ашшӗне хирӗҫ ытларах та ытларах протестлеме тытӑнать. Вӑл ашшӗне пӗр шеллемесӗр питлет, ашшӗн тискерлӗхне уҫса кӑтартать. Вӑл ашшӗне хаяр сӑмахсем калать:

Анчах эсир хӗрӗре
Ӳстерессе ӳстертӗр,
Ӳстертӗр те укҫашӑн
Сутса ярса пӗтертӗр...

. . . . . . . . . .

Мӗнпӗн ҫапла ху хӗрне
Парса ятӑн кашкӑра!
Саншӑн ҫав пур ырӑлӑх
Мӗн пурӗ те укҫара..

Нарспи ашшӗ-амӑшӗсем хӑйсен тӑван хӗрне ылханса Сетнер килӗнчен тухса каяҫҫӗ. Ҫав ирсӗр, вараланчӑк ылхавран

Намӑсланса, хӗрелсе
Хӗвел анчӗ, пытанчӗ,—

тесе ҫырать поэт. Сетнерпе Нарспи иккӗшӗ пӗрле юлаҫҫӗ. Анчах та хуйхӑ пӗтменнине, малашне тата ытларах инкек-синкексем кӗтсе тӑнине туйса, Сетнер амӑшӗ йывӑррӑн хашлатса хуйхӑрать.

Юратнӑ чӗресем пӗрлешрӗҫ, анчах телей ҫук. Укҫа тытӑмӗ ҫинче никӗсленсе тӑракан пурнӑҫ йӗрки тӗп пулмасӑр ӗҫхалӑхӗн телей пулма пултарайманнине Иванов лайӑх чухланӑ. Этем телейӗн тискер тӑшманӗ—Тӑхтаман пӗтет, кайран Михетере те вӗлереҫҫӗ, анчах тӑхтамансемпе михетерсен ирсӗр тӗнчи ҫаплипех тӑрса юлать. Сетнер амӑшӗ ассӑн сывланипе вӗҫленекен 13-мӗш юрра вуласа тухнӑ хыҫҫӑн вулакан ҫакна туйса илет: Нарспипе Сетнерӗн ҫӗнте-

рĕвĕпе телейĕ самантлăха кăна, вĕсем пурпĕрех капитализм пусмăрĕнче пĕтмелле. Чуралăхăн тискер тĕнчине хирĕç Нарспипе Сетнер хăйсем халлĕн кăна кĕрешеççĕ. Силпи ялĕн çыннисем, вĕсене хĕрхенеççĕ пулин те, тăшмансене хирĕç кĕрешме пулăшаймаççĕ. Сетнерпе Нарспи пĕтеççĕ. Çаксенче пуринче те эпир каллех Иванов пурăннă вăхăтри саманан сăн-сăпачĕ тĕрленсе юлнине куратпăр. Революцие путарса лартаççĕ. Хура реакци тапхăрĕ çитсе çапать. Ирĕклĕхшĕн кĕрешекен халăхăн чи лайăх ывăлĕ-хĕрĕсене тĕрмесене хупса хураççĕ. Ирĕклĕхе таптаса тăкаççĕ, ирĕклĕхĕн сассине хупласа хураççĕ. Çакă вăл поэт творчестви çине хăйĕн йĕрне хăвармасăр иртме пултарайман. Юлашки çичĕ çул хушшинче поэт хăйĕн юратнă ĕçĕпе—творчество ĕçĕпе ĕçлеме пачах та май тупаймасть.

Анчах та К. В. Иванов хăйĕн поэминче татса парайманнине историйĕн малалли аталанăвĕ татса пачĕ.

„Нарспи" поэмăна çырнăранпа вăтăр çул ытла иртрĕ.

Чăваш халăхĕ „Нарспи" поэмăна юратнă, юрататъ те. Вăл ăна—хăйĕн чĕлхин мĕнпур пуянлăхĕсемпе, хÿдожествăллă

вӑййӗпе малтанхи хут ун тӑрӑх паллашнӑшӑн ҫеҫ мар юратать. Халӑх „Нарспи" поэмӑра пысӑк художествӑллӑ мастерлӑхпа сӑнласа панӑ хӑйӗн октябрьччченхи йывӑр пурнӑҫӗн нумай енӗсене те курса тӑнӑ.

Михетерпе Тӑхтаман образӗсем ҫине пӑхса халӑх хӑйӗн ӗмӗртенхи тӑшманӗсене палласа илнӗ. Сетнерпе Нарспи образӗсене курсан, этеме хупӑрласа тӑракан тӗнчен хаяр законӗсене хирӗҫ малтан пуҫласа сасӑ ҫӗкленӗ хӑйӗн ывӑлӗ-хӗрӗсене паллана. Ҫак протеста халӑх асаплӑхпа пусмӑрлӑха хирӗҫ, хӗнхурпа чуралӑха хирӗҫ ҫӗкленекен хӑйӗн ҫилли пекех хапӑл туса йышӑннӑ.

„Нарспи" поэма Михетерпе Тӑхтамана чӗререн курайми тӑвать, Нарспипе Сетнере тата унӑн амӑшне пӗтӗм кӑмӑлтан юраттарать. Нарспипе Сетнер тата унӑн ват амӑшӗн образӗсене поэт калама ҫук ӑшшӑн, пысӑк юратупа сӑнласа панӑ. Нарспипе Сетнер трагедине вулакан поэтпа пӗрлех чӑтса ирттерет.

„Нарспи" поэмӑн вӑйӗ, чи малтан,— вӑл чӑваш халӑхӗн революцичченхи пурнӑҫӗн пысӑк та сложнӑй явленийӗсене ӗнентерӳллӗн те витӗмлӗн кӑтартса панинче. Пуянсем чухӑнсене пусмӑрласа

пурӑнни, ӑраскалсӑрлӑха хӑварнӑ халӑх асапланни, вӗсем ҫутӑ та телейлӗ пурнӑҫ тума ӗмӗтленсе тата вӑл пурнӑҫ чӑнах та пуласса шанса, хӑйсен пусмӑрҫисене хирӗҫ хӑюллӑн та паттӑррӑн кӗрешни—ҫаксем пурте чӑн-чӑн халӑх пурнӑҫӗнчен илсе, художествӑллӑ пысӑк талантпа сӑнласа хӑварнӑ картинӑсем. Ҫаксемшӗн юрататъ те халӑх „Нарспи" поэмӑна.

К. В. Иванов ҫырнӑ пайтах произведенисен тӗп образӗ—хӗрарӑм („Тимӗр тылӑ", „Икӗ хӗр", „Тӑлӑх арӑм", „Нарспи").

Три тяжкие доли имела судьба:
И первая доля—с рабом повенчаться,
Вторая—быть матерью сына раба,
А третья до гроба рабу покоряться.—
И все эти грозные доли легли
На женщину русской земли,—

тесе ҫырнӑ вырӑссен поэчӗ Н. А. Некрасов.

Ҫак йывӑр та хаяр шӑпа чӑваш хӗрарӑмӗ ҫине, вырӑсмар ытти национальноҫсен хӗрарӑмӗсем пекех, икӗ хут ытларах тиеннӗ. Чӑваш хӗрарӑмӗ социаллӑ-экономикӑллӑ тата ҫемьери пусмӑра тӳснисӗр пуҫне тата нациллӗ пусмӑра та тӳссе пурӑннӑ.

К. Иванов, хӑйӗн произведенийӗсенче чӑваш хӗрарӑмӗн асаплӑ пурнӑҫне кӑ-

тартса парса, чӑваш халӑхӗн пурнӑҫӗнчи социаллӑ-политикӑллӑ явленисене уҫса пама, общество пурнӑҫӗнчи тискерлӗхсемпе йӗркесӗрлӗхсем мӗнле сӑлтавсенчен тухса тӑнине тӗпчесе пӗлме тӑрӑшнӑ.

К. Ивановӑн художествӑллӑ пысӑк мастерлӑхӗ икӗ никӗс ҫинче—чӑваш фольклорӗпе ырӑссен классикӑллӑ литератури ҫинче ӳссе аталаннӑ. Иванов Пушкина, Лермонтова, Некрасова, Кольцова т. ыт. писательсене юратса вуланӑ, вӗсенчен вӗренсе пынӑ. Унӑн произведенийӗсенче ырӑс классикӗсен произведенийӗсен шухӑшӗсем палӑраҫҫӗ. Анчах та Иванов произведенийӗсен тӗп никӗсӗ—вӑл чӑваш халӑхӗн творчестви. Иванов поэзийӗн чӗлхи—халӑхӑн чӗрӗ чӗлхи, пӗр ырӑнти халӑхӑн ҫеҫ мар, мӗнпур ырӑнсенчи чӑваш халӑхӗн чӗлхи. Поэт халӑх чӗлхи пуянлӑхӗнчен мӗнпур илемлӗ, паха, чӗрӗ сӑмахсене суйласа илсе, литература чӗлхине нумай ҫӗрти чӑваш сӑмахӗсемпе пуянлатнӑ. Хальхи чӑваш литератури чӗлхин никӗсӗнче Иванов поэзийӗн чӗлхи тӑрать. Анчах вӑл чӗлхе ҫӗнӗ условисенче пулнӑ сӑмахсемпе пуянланнӑ.

Чӑваш литературин аталанӑвӗнче К. В. Иванов влиянийӗ ҫавтери пысӑк.

Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем Иванов-ран поэзин пысăк ăсталăхне, литература чĕлхин мастерлăхне вĕренсе пынă, вĕренсе пыраççĕ те. Хальхи чăваш писателĕсен произведенийĕсенче — поэзире çеç мар, прозăпа драматургире те — нумайĕшĕсенче Иванов поэзийĕн вăйĕ палăрать.

Хальхи чăваш илемлĕ литератури, К. В. Иванов поэзийĕнчен пуçланса кайнăскер, хăйĕн аталанăвĕнче питех те пысăк ӳсĕм çулĕ турĕ. Иванов поэзийĕ вырăссен прогрессивлă литературин влиянийĕпе ăнăçлăн ӳссе аталаннă пекех, пирĕн чăваш совет литератури аслă вырăс халăхĕн революциллĕ литератури влиянийĕпе ӳссе аталанать. Чăваш совет литератури çĕнĕ идейăллă содержанипе, çĕнĕ формăсемпе пуянланчĕ. Пирĕн хальхи литература – социализм тапхăрĕнчи литература.

Питех те пуянланчĕ пирĕн чăваш чĕлхи. Революциччен вăл кулленхи пурнăçра калаçмалли ансăр чĕлхе çеç пулнă пулсан, халĕ обществăллă-политикăллă чĕлхе, государство чĕлхи пулса тăчĕ. Халĕ çак чĕлхепе Чăваш АССР Конституцине çырнă; чăваш чĕлхи çине марксизм-ленинизм классикĕсен аслă тво-

ренийĕсене, вырăс тата пĕтĕм тĕнче литератури классикĕсен произведенийĕсене куçарнă.

Чăвашсен художествăллă литературипе литература чĕлхи çĕнĕрен çĕнĕ ӳсĕмсем туса пыраççĕ. Вăл ӳсĕмсем мĕн чухлĕ нумайрах, çавăн чухлĕ ытларах тав тăвать халăх Константин Иванова, пирĕн художествăллă литературăна пуçласа яракан, литература чĕлхи никĕсне хуракан аслă поэта.

* * *

К. В. Иванов çуралнăранпа 50 çул тултарнă уява чăваш халăхĕ Аслă Октябрьти социализмлă революци çирĕм виçĕ çул тултарас умĕн уявласа ирттерет.

Октябрь революцийĕпе Совет влаçĕ пирĕн халăха, хамăр çĕршыври ытти мĕнпур халăхсемпе пĕр танах, экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен ӳсме калама çук анлă çулсем уçса пачĕç. Коммунистсен партин ленинла—сталинла наци политики тăван çĕршыври нумай нацилĕ халăхсен хăватлă талантне пурнăç вăйĕ парса çунатлантарчĕ. Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе тата аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе

пирĕн чăваш ĕçхалăхĕ формипе нацилĕ, содержанипе социализмлă культура тăвать.

Чăваш халăхĕн хăйĕн шкулсем, хуçалăхпа культура строительствин пур отраслисенче те ĕçлеме кадрсем, хăйĕн литератури, искусстви пур. Тăван чĕлхепе темиçе пиншер экземпляр тиражлă кĕнекесем, хаçатсем, журналсем тухса ĕçхалăх хушшине саралаççĕ

Чăваш халăхĕ К. В. Ивановăн литературăллă наследствине пархатарлăн йышăнчĕ, ăна пĕтĕм халăх тивĕçлĕхĕ туса хучĕ.

Патша саманинче поэт хăйĕн чаплă произведенийĕсемпе ĕçхалăхĕн сарлака массисем патне çул тупма пултарайман. Октябрь революцийĕпе Совет влаçĕ кăна Иванов поэзине халăх патне çитме анлă çул уçса пачĕç. Иванов произведенийĕсем халăх хушшинче массăллăн саралаççĕ. Унăн „Нарспи“ поэми чăвашла çиччĕмĕш изданипе пичетленсе тухрĕ.

К. Иванов поэзийĕпе чăваш вулаканĕсем çеç мар, тăванлă халăхсем те интересленеççĕ. „Нарспи“ поэмăна вырăсла виçĕ хутчен куçарнă, икĕ изданипе пичетлесе кăларнă; поэмăна удмурт чĕлхи

ҫинĕ куҫарнă, хальхи вăхăтра тутарла, марилле, мордвалла т. ыт. те куҫараҫҫĕ. Ку ĕнтĕ К. Иванов поэзийĕ чăнчăнах та халăхăн ĕмĕртенхи ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсене хумхантарнине, вăл ытти халăхсен поэзийĕпе те пĕр тăванлине ҫирĕплетсе парать.

Константин Иванов этемлĕхе чуралăх пусмăрĕнчен хăтарасси ҫинчен тата унăн творчествăллă вăйĕсене ҫĕклентересси ҫинчен ĕмĕтленнĕ. Ивановăн ҫак ҫутă ĕмĕчĕсем пурнăҫа кĕчĕҫ. Ирĕклĕ совет ҫынни хăйĕн ирĕклĕ ҫĕрĕ ҫинче коммунистла обществăн ҫутă ҫуртне тăвать.

Чăваш халăхĕ, К. В. Иванов юбилейне уявласа ирттернĕ май, хăйĕн чи малтанхи поэчĕн ятне асăнса мухтанать. Сталинла Конституцин ăшă хĕвелĕ айĕнче вăл литературăпа искусство тата культура фрончĕ валли ҫĕнĕрен ҫĕнĕ талантсем пăхса ҫитĕнтерет.

Цена 30 коп.

**ЖИЗНЬ**
**И**
**ТВОРЧЕСТВО**
# К. В. ИВАНОВА

**ДЛЯ ДОКЛАДЧИКОВ**

На чувашском языке

Госиздат ЧАССР
Чебоксары ◆ 1940